**Районти почта историйĕнчен**

# Эпир çапла пуçларăмăр



Паянхи пек ас тăватăп, 1946 çулхи ноябрĕн 26-мĕшĕнче атте шкула пычĕ те, килте мана районтан килнĕ çын кĕтни çинчен пĕлтерчĕ. Вăл вăхăтра эпĕ шкулта завхоз пулса ĕçлеттĕм. Мана кĕтекенĕ Мăн Сĕнтĕрти çыхăну кантурĕн пуçлăхĕ Андрей Матвеевич Курдыков иккен.

Шкулта вĕреннĕ вăхăтра эпĕ учком председателĕ пулнăччĕ. Пĕррехинче пирĕн учком канашлăвне РОНО заведующийĕ Пожеданов хутшăнса сăмах каланăччĕ. Вăл пирĕн учком ĕçне тивĕçлĕ хак пачĕ, мана зажимлă пурçăн галстук тата Хисеп грамоти парса чыс турĕ. Райкомăн иккĕмĕш секретарĕ пулса çав çулсенче шкул директорĕ пулнă Антон Филиппович Воронов ĕçлетчĕ. Учком ĕçĕ тăрăх ас туса юлнипе райĕçтăвкомпа райком ĕçченĕсем ман кандидатурăна республикăсем хушшинчи пысăк ылмашу (обменный) пункчĕн пуçлăхĕ пулма сĕннĕ. Пĕрре савăнтăм, тепре иккĕлентĕм: пултараятăп-ши? Çапах та килĕшрĕм: манăн Шупашкартан машинăсемпе хамăр республикăри Сĕнтĕр, Муркаш, Советски, Етĕрне тата Мари республикинчи Елас, Юрино районĕсем, Козьмодемьянск хули валли почта тиесе килсе йĕркеллĕ шутласа йышăнмалла. Тепĕр кунне вара манăн çав районсенчен килнĕ почтăна Шупашкара ăсатмалла. Çав вăхăтрах Муркаш, Советски, Етĕрне, Елас, Козьмодемьянск почтисене Сĕнтĕре çитермелле. Кашни кунах çапла – канма вăхăт çук.

Пĕрремĕш ĕç кунĕ ноябрĕн 26-мĕшĕнче, кăнтăрла иртни 3 сехетре пуçланчĕ. Андрей Матвеевич килтех пулма, почта тиесе килекенсем сана хăйсемех шыраса тупĕç тесе асăрхаттарчĕ. Асăннă палламан çынсем, арçынпа хĕрарăм (шоферпа тепĕр çын), çăнах та, килех пычĕç. Яла машинăсем кĕреймен пирки, пирĕн, аттепе иксĕмĕрĕн, çунашкасем сĕтĕрсе çул çине, халĕ столовăй тата кафесем вырнаçнă тĕле, тухма тиврĕ. “Полуторкăпа” “Пикап” тиесе килнĕ почтăна шутласа йышăнса юлтăмăр та çунашкапа турттарса килти кĕлете (амбара) вырнаçтартăмăр. Çапла майпа тул çутăличчен, хунар çутипе, 7 район почтине уйăрммăн шута илсе пайласа пĕтертĕмĕр. Эпир аттепе кĕлетрен тухнă çĕре Андрей Матвеевич Сĕнтĕртен çуранах çитрĕ те пире çĕнĕ ĕçе вĕрентсе хăнăхтарма тытăнчĕ. Ыйхă çинчен вуçех манса кайрăмăр. Хуралçă пулма аттене вырнаçтарчĕ вăл. Хам сопровождающий пулма эпĕ ачаран пĕрле ӳснĕ, салтакран килнĕ таса чунлă, Москакассинче халĕ те пурăнакан Алексей Филиппович Кукушкина вырнаçтартăм. Çапла вара ноябрĕн 26-мĕшĕ Москакасси почта уйрăмĕн çуралнă кунĕ пулса юлчĕ.

Тепĕр темиçе кунтан пире телефон вырнаçтарса пачĕç. Москакасси ялĕнчи пĕрремĕш телефон! Пирĕн кил пĕр-пĕр учреждени, тĕрĕсрех каласан, пĕчĕкрех вокзал пек пулса тăчĕ. Сĕнтĕрпе Муркаша машинăсемпе çӳреме çулсем пулман пирки икĕ районти учреждени представителĕсене конюхсем пирĕн пата çитереççĕ те Шупашкара каякансем киличчен кĕтеççĕ е тепĕр кунхине илме килеççĕ. Хăш-пĕр кунсенче пилĕк-ултă лаша таран пухăнатчĕ. Мĕн чухлĕ аса илӳ, мĕн чухлĕ тĕл пулу!

А. Николаев космонавт вилсен, унпа сывпуллашма Шупашкарти академи драма театрне кайнă чухне троллейбус çинче, пĕр шутламан çĕртен, парти обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулнă Илья Павлович Прокопьева тĕл пултăм. Хăй палласа илчĕ. Чылай калаçрăмăр иртнисене аса илсе.

Нумай чуптарнă пире лашасемпе почта çулĕсем. Акă, сăмахран, почта машинине кĕтетпĕр. Каç çывхарса килет – вăл çук. Пĕр-пĕр лесник çуртĕнчен шăнкăравласа пĕлтереççĕ: “Машина çитеймест. Шупашкар çулĕ çинче чарăнса ларнă.” Эпир вара, Муркашран Яриков, Сĕнтĕртен К. Иваков тата эпĕ, фельдъегерьсем, икĕ-виçĕ лашапа каяттăмăр. Хыркасси патне çити кайни те сахалах пулман. Апла пулин те, эпир почта машинине кĕтсе илмесĕр каялла яни пĕрре те пулман. Яваплăха çирĕп туйнă. Унта 7 район почти вĕт. Хăй вăхăтĕнче М.И. Калинин çыхăну ĕçне пысăка хурса “Связь – это нервы страны”,– тенĕччĕ. Вăт, эпир çав “нервăсене” лайăх упранă.

Çапла ĕçлесе ирттертĕмĕр малтанхи хĕле. Анчах ун хыççăн çуркунне çитет-çке. Районсене каймалли çулсем хупăнчĕç: ни çунапа, ни урапапа тухма çук. Шупашкартан Москакассине çити почта машини чиперех çитет-ха. Пирĕн ăçта кайса кĕмелле? Муркаш, Советски, Етĕрне почтисемшĕн пăшăрханмастăпха эпĕ. Вĕсене Петр Калистратович Синичкин йĕркелесе тăрать. Манăн тăватă район почтине Сĕнтĕре ăсатмалла. Пĕртен-пĕр меслет кăна юлать: хулпуççи урлă кутамкка çак та кирлĕ çĕре тухса ут, почтăна вырăна çитер. А.М. Курдыков сĕнĕвĕпе, райкомăн иккĕмĕш секретарĕпе Антон Филиппович Вороновпа çыхăнса лару-тăрупа паллаштарăм. Вăл çапла каларĕ: “Халĕ кашни ял колхоз. Çывăхри колхоз председателĕ патне кĕр те çак документа пар”, – терĕ. Мана вăл телефонограмма пачĕ. Тексчĕ çаплаччĕ: “Райком Л.Н. Кожелеева пулăшма çав числара çавăн чухлĕ çын уйăрма ыйтать”. Мана çак телефонограммăна мĕнле пурнăçлани çинчен хăй патне пĕлтерсех тăма хушрĕ. 14-15 çынран тăракан кутамккаллă “транспортпа” эпир кирлĕ çĕре корреспонденцисем, периодика пичечĕ, кинолентăсем яланах вăхăтра çитерсе тăраттăмăр.

Москакассинчи çыхăну çуртне çĕр паман пирки манăн Мускава, И.Я. Псурцев çыхăну министрĕ патне çитме тиврĕ. Унта кайма республикăри çыхăну управленийĕ сĕнчĕ. Мускавра хамăр патăмăрти лару-тăрăва пĕлтернĕ хыççăн тепĕр икĕ кунтан мана пакет ярса пачĕç. Шупашкара çитсен ăна управлени пуçлăхĕ М.Я. Димитриев уçса вуларĕ те: “Ты почти у Сталина был”, – терĕ. Çĕр илме унран ирĕк ыйтмалла пулнă ун чухне. Управленирен пĕр ГАЗ-51 машина валли наряд ярса пачĕç. Çав çĕнĕ машинăпа çыхăну уйрăмĕн çурчĕн никĕсне хывма Етĕрнерен кирпĕч турттартăмăр.

Хам çуралнă çуртра çыхăну ĕçĕпе 6 çула яхăн ĕçленĕ хыççăн эпир çĕнĕ почта çуртне куçрăмăр. Унта эпĕ пĕтĕмĕшле 20 çул вăй хутăм.

Çак кунсенче Москакассинчи çыхăну уйрăмĕ 60 çул тултарчĕ, эпĕ вара 80 çулхи юбилее паллă турăм.

**Л. КОЖЕЛЕЕВ,**
**Москакассинчи çыхăну уйрăмĕн пĕрремĕш пуçлăхĕ, перекет кассин заведующийĕ, Уралти политехника институчĕн студенчĕ, республикăри ОБХСС тата КГБ штатра тăман сотрудникĕ пулнăскер.**

**Районти прокуратурăра**

# Эрех пĕтмест, хамăр пĕтетпĕр

Çĕр çинче никам та иккĕ пурăнмасть. Пĕрне те пулин ырă ĕçсем туса, несĕлĕмĕрсем парнелесе хăварнă ырă йăла-йĕркесене асра тытма пурнăçа пултарнă таран пуянлатса хамăр хыççăн ырă ят хăварасчĕ. Эх, пурте çак шухăш-тĕллеве тĕпе хурса пурăнсан тем пекехчĕ те... Çук çав. Пурнăç пире тепĕр чух тӳнтерле пулăмсемпе те хурлантарать. Лайăххипе начарри пĕр-пĕринчен инçетре пурăнмаççĕ пуль çав. Начаррине хăш чухне хамăр алăпах укçа тӳлесе туянатпăр. Кĕсьери нухратпа çемьесене савăнтарас, ачасене, тăвансене телейлĕ тăвас вырăнне эрех ĕçсе чыса варалатпăр, сывлăха хавшататпăр, çемьесене тăлăха хăваратпăр. Çитменнине тата укçашăн, мулшăн чунне шуйттана сутакансене, çын куççулĕ çинче мул пухма хăтланакансене, пурнăçа сутса пуйтарса хăваратпăр. Пуйтарса тени тĕрĕсех те мар пуль-ха. Çын куççулĕ çинче, çын пурнăçне таптаса каçса телейлĕ пулни пулман-ха хальлĕхе, пулас та çук. Ун йышшисем вара тепĕр майлă, хăйсен ятне, тăванĕ-хурăнташĕн ятне вараласа, çынсен ылханне тивĕçлĕ пулса, усал ятлă пулса юлаççĕ.

Шел пулин те, хамăр районтах, хамăр хушăрах тĕл пулаççĕ темле пăтранчăк шăршлă шывран та услам тума шутлакансем.

Акă, кăçалхи июнь пуçламăшĕнче Чĕпĕлкасси ялĕнче пурăнакан Х. хăй палламан пĕр çынран 5 литрлă канистрăпа автомобильсен чӳречисене сивĕпе шăнасран сĕрмелли шĕвек туянса юлать. Чӳречисене те сĕрсе тĕрĕслемест, сыпса пăхма та хăрать, хăй сывлăхне лайăх сыхлать çак хĕрарăм, шăршласа кăна пăхать. Спирт шăрши пур, гардусне те палăртнă. Хама юрамасть – çынна юрать, çапла пĕтĕмлетӳ тăвать вăл хăй тĕллĕн. Çак шĕвеке ĕçме питĕ сиенлине пĕлсех, ăна 42,6 градуслă пуличчен шывпа хутăштарать те “Забытая водка” этикеткăллă 0,25 кĕрекен кĕленчене тултарса хăй паллакан П. гражданина сутса ярать. Унран илсе юлнă 30 тенкĕ Х-на усал ĕçсем тума хавхалантарать пулмалла. Çак кĕленчери спиртлă шĕвекпе пĕрле сывлăхшăн сиенлĕ микроволокносемпе микрочастицăсем, диэтилфталат пурри шутра та çук ку хĕрарăмшăн. Çапла вăл çынсен сывлăхĕшĕн, пурнăçĕшĕн сиенлĕ продукцие хăй килĕнче упраса, сутса Раççей Федерацийĕн уголовнăй кодексĕн 238 статйин 1 пайне тивĕçлĕ преступлени тунă.

2006 çулхи июлĕн 20-мĕшĕнче 20 сехет те 10 минутра усал ĕçпе çыхăннă çак хĕрарăм асăннă хаяр шĕвеке 53,2 градуслă пуличчен шĕветсе «Водка федеральная» этикеткăллă 0,375 литрлă кĕленчене ярса Т. гражданкăна 30 тенкĕпе “ярăнтарать”. Çапла вара хăй те суд тенкелĕ çине “ярăнса” çитет.

Эпир асăннă ĕç вĕçленнĕ тейĕпĕр. Анчах хаяр шĕвеке сутса “усал укçа” патне алă тăсакансем урăх çук тесе калайратпăр-ши? Тем пекехчĕ те... Нумайăшĕ çавăн çинчен ĕмĕтленетпĕр. Анчах вĕсене тупса палăртма хамăртан мĕн килнине тăватпăр-ши? Тĕлĕнмелле пулин те, пытарса хăварма хăтланакансем те тупăнаççĕ. Çакна калама та сăлтав çук мар. Акă, нумаях пулмасть хамăр районтах пĕр ялта паллă мар шĕвек ĕçсе пĕр арçын пурнăçран яланлăхах уйрăлнă. Çак шĕвеке кам патĕнче туяннине пĕлекенсем пурах ĕнтĕ. Анчах вĕсем шалти ĕçсен пайĕнче ĕçлекенсене пулăшни çук-ха. Çакă вăл преступлени тăвакансене пулăшни мар-и-ха. Обществăн çак инкеке хирĕç пĕтĕм йышпах кĕрешесчĕ. Унсăрăн çухатусем ытларах пулĕç. Ĕçме юрăхсăр спиртлă шĕвексем юратнă, çывăх, пултаруллă çынсене пирĕн хушăран хăйĕн танатине сĕтĕрсе кайнине лăпкă куçпах пăхса тăрăпăр-и?

**М. ТАРАСОВ,**
**район прокуратурин аслă следователĕ.**

**Бокс – районта вăй илсе пыракан спорт**

# Пулас олимпиецсен ăмăртăвĕ

– Сывă çамрăк – тĕреклĕ экономикăпа ырă малашлăх никĕсĕ. Сывлăх çирĕп пулассинче вара спорт малти вырăнта тăрать. Çавăнпа та спорта кăмăллакан çамрăк, ăна çак çулпа илсе пыракан тренер чăннипех çĕршыв пуласлăхĕ, – терĕ инçетри 1968 çулта Мексикăн тĕп хулинче Мехикора иртнĕ Олимпиадăра спортăн бокс тĕсĕпе Олимп чемпионĕ пулса тăнă 4 хут СССР чемпионĕ Валериан Соколов хăй 60 çул тултарнă ятпа хăйĕн тата Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕн кубокĕшĕн Шупашкарти “Олимпийский” стадионра ирттернĕ “Раççей çамрăклăхĕ” турнирăн финалне уçнă май. Çак турнирăн финалĕ боксерсемшĕн Раççей Кубокне çул уçнине шутласах-тăр ăмăртура чылай паллă боксерсене курма тӳр килчĕ: ăмăрту хуçи В. Соколов, ăна Олимп тӳпине çĕкленĕ Г. Герасимов тренер, Чăваш Республикин бокс федерацийĕн Президенчĕ В. Лаптев, Шупашкар хулин бокс федерацийĕн Президенчĕ В. Мельник, боксра чăваш ятне çĕкленĕ В. Львов т. ыт. те. Шупашкарти çак паллă ăмăртăва уçма пынă ЧР Шалти ĕçсен министрĕ В. Антонов генерал- майор, ЧР Физкультурăпа спорт министрĕн пĕрремĕш çумĕ Ю. Николаев, Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Н. Емельянов та асăннă мероприятие уяв сăнĕ кĕртрĕç.



Олимп чемпионĕн виçе категорийĕнче чăвашсемех вăйлăрах (сулахайри С. Черкашин).

Н. Емельянов Чăваш Енĕн пирвайхи Олимп чемпионĕ В. Соколов ятне хулари Атăл хĕрне анакан пĕр çĕнĕ урама пани пухăннисемшĕн пысăк чыс-хисеп пулчĕ. “В. Соколов боксер 1968 çулта Мексикăн тĕп хулинче Мехикора 54 виçеллĕ категорире Олимп чемпионĕ пулса тăни – Чăваш Енĕн спорт пурнăçĕнче ылтăн саспаллисемпе çыраннă пулăм. Эпир çакна яланах асра тытма тата ăна малалла аталантарма тивĕç”, – терĕ ăмăртăва уçса сăмах каланă май Н. Емельянов.

– В. Соколов Чăваш Енĕн çеç мар, пĕтĕм Раççейăн паллă спортсменĕ, паян педагогика наукисен кандидачĕ, çамрăксен ăста наставникĕ. Эсир спортăн çак тĕсне суйласа илни – хăех çĕнтерӳ. Ку вăл сирĕн пурнăç путевки. Аталану çулĕпе пырса эсир çывăх çулсенчех Олимпиада çĕнтерӳçисем пуласса шанатпăр, çавна кĕтетпĕр, – терĕ çамрăк боксерсене умри раундсенче ăнăçусем сунса ЧР Шалти ĕçсен министрĕ Вадим Валентинович Антонов генерал-майор.

“Раççей çамрăклăхĕ” турнир декабрĕн 17–23-мĕшĕсенче Красноярскра иртекен Раççей Кубокне çул уçнăран унăн финалĕнче спортсменсем йышлă пулнинчен тĕлĕнмех кирлĕ мар. Каламалла, асăннă ăмăртăва Чăваш Республикин вунă боксертан тăракан пĕрлештернĕ команди хутшăнчĕ. Вĕсенчен тăваттăшĕ Муркашсем пулни хăех юлашки çулсенче пирĕн районта бокс тĕллевлĕ аталанни çинчен калать. Ăмăртăва хутшăннă пирĕн ентешсем: Сергей Черкашин (54 килограмлă виçе категорийĕнче), Александр Никитин (51кг), Андрей Тимофеев (57 кг), Евгений Григорьев (48 кг). Пĕтĕм Раççейрен пухăннă 102 спортсмен хушшинче Муркашсем 4-ăн пулни – ӳсĕмĕн пĕрремĕш картлашки.

Ăмăрту саманчĕсем. Малтанхи вăйăсенче çăмăллăнах çĕнтернĕ А. Тимофеев çурма финалта Санкт-Петербургри ăста спортсменпа тĕл пулчĕ. Питĕ çивĕч пынă 4 раунд кашнин асĕнчех юлчĕ. Кунта Андрей выляса ячĕ пулсан та, судьясем ăна хăйĕн виçе категорийĕнчи чи лайăх боксер тесе йышăнчĕç, хăйне Раççей Кубокĕнче кăтартма ирĕк пачĕç. С. Черкашинпа А. Никитин вара хăйсен тĕл пулăвĕсенче хăйсем çеç çĕнтерме пултарнине яр уççăн кăтартса пачĕç. Малтанхи кĕрешӳсенче Башкортостанран тата Иркутскран килнĕ ăста боксерсене çĕнтернĕ Сергей финалта Воркутаран килнĕ спорт мастерĕн кандидачĕпе, хăйĕн виçинче кăçалхи Раççей чемпионĕпе тĕл пулчĕ. Кĕрешӳ питĕ кăткăс иртрĕ. Çапах та судьясем пирĕн спортсмен çаврăнăçуллăрах та ăстарах пулнине палăртрĕç. Кĕрешӳ вĕçленсен пирĕн боксершăн хăйне евĕр сюрприз та пулчĕ: В. Соколов хăй Олимп медальне çĕнсе илнĕ виçере çĕнтернĕ спортсмена музыка центрĕ парнелесе чысларĕ.



Пирĕн команда Олимп чемпионĕпе В. Соколовпа пĕрле.

А. Никитиншăн та финалти кĕрешӳ çăмăллăн иртмерĕ. Апла пулин те, С. Черкашин тренер ăсталăхĕпе спорт çулĕ çине тухнăскер Раççей чемпионне Тимур Фазулов пушкăрта çĕнтерсе “Раççей çамрăклăхĕ” турнир чемпионĕ пулса тăчĕ.

Евгений Григорьев та Муркашсен ятне çĕре ӳкермерĕ. Хăйĕн виçе категорийĕнче Пермьрен килнĕ ăста боксера выляса ярса Женя турнирта 4-мĕш вырăн йышăнчĕ.

Пĕтĕмлетӳ вара çапларах. Чăваш Республикин пĕрлештернĕ команди турнирта 3 ылтăн, 2 кĕмĕл, 1 пăхăр медаль çĕнсе илчĕ пулсан, 2 ылтăнпа пăхăр медаль Муркашсен вăйĕпе илнĕскерсем. Пултаратпăр вĕт? Çакăнта Сергей Васильевич Черкашин тренерăн шкулĕ курăнмасть-и-ха? Хирĕçле хуравсем пулма та пултараймаççĕ. Паян вара халĕ каланине çирĕплетсе С. Черкашинпа А. Тимофеев çамрăк боксерсем хăйсен чысне Раççей Кубокĕнче хӳтĕлеме хатĕрленеççĕ. Сăмах май, асăннă ăмăртăва Чăваш Республикинчен икĕ боксер çеç хутшăнаççĕ, иккĕшĕ те 1989 çулта çуралнăскерсем, Муркашран.

– Муркашсем спортпа туслине тахçанах пĕлетĕп, анчах юлашки çулсенче кунта бокс вăй илме пуçлани çĕнĕ шанăçсем çуратать, спортăн çак тĕсĕн тилхепине тытакан С. Черкашин тĕрĕс çул çинче пулни çинчен калать,– терĕ кĕске калаçура В. Соколов Муркашсен малашлăхне шанса.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**